Раççей Федерацийĕн вĕренӳпе ăслăлăх министерстви
Федерацин аслă професси пĕлĕве паракан
патшалăх бюджет вĕренӳ учрежденийĕ
«И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

# В. Эльби, У. Эльмен, А. Тарасов калавĕсенчи хĕрарăмсен портречĕсем

Ĕçе пурнăçлаканĕ – «Тăван чĕлхепе литература, вырăс чĕлхи» специальноçпа куçăмлă уйрăмра V – мĕш курсра вĕренекен Орлова Оксана

***Проект тĕсĕ:*** *индивидуаллă проект*

***Урок тĕсĕ :****проект мелĕпе усă курса иртермелли килти вулав урокĕ.*



elenaranko.ucoz.ru

**<u>Проект ĕçĕн тĕллевĕ</u>:** *шкулта*
*В. Эльби, У. Эльмен, А. Тарасов пултарулăхне тишкернĕ май проект мелĕпе тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.*



elenaranko.ucoz.ru

***<u>Проект задачисем:</u>***

1. *Палартнă технологисене шута илсе тĕрлĕрен ĕç сĕнесси.*
2. *Çыравçă пултарулăхĕнчи тĕп туртăмсене палăртасси.*
3. *Ачасен пĕлĕвне тарăнлатасси.*
4. *Пухнă пĕлĕвне ĕçре тĕрĕслесе çирĕплетесси*



elenaranko.ucoz.ru

# Урок эпиграфĕ:

Чăваш хĕрарăмĕ!
Илемлĕ эсĕ, паттăр, —
Эп пат татса калатăп сăмаха.
Эс мĕн чуль ача çуратса патăн
Çĕршыври çĕр тĕрлĕ халăха!

Чăваш хĕрарăмĕ!
Ĕçчен те эсĕ, ырă,
Татах калатăп: сăнупа - чечек.
Тен, çавăнпа нумай çуратрăн вырăс,
Чылай ўстертĕн пушкăрт та узбек...

Тур сывлăх патăр,
Мĕн шăтнийĕ — ўстĕр,
Çаран çинче хитре кашни çеçке.
Ман темшĕн ытларах курас килет-
çке
«Анне! Анне!» тесе чĕнен пепке.

Александр Савельев-Сас



# Авторсем

***Валентина Эльби***

***Арсений Тарасов***

***Улькка  Эльмен***

**Киле ĕç**

# Пурнăçĕпе кун-çулĕ

Хайлавĕсем

Эпиграф

«Каччăпа вылясан» калав

Карта

Вĕреннĕ материала çирĕплетни

Кластер

Ĕçсем

Петĕмлетӳ

# Эпиграф:

***Чыса çухатни пуçа çухатнипе пĕр танах.***

***Чысĕ пĕтнĕ çынна мул та пулăшман.***

Ваттисен сăмахĕ.



- ***Ачасем, эсир çак ваттисен сăмахĕсене мĕнле ăнланатăр?***

- ***Эсир ваттисем каланă çăмахсемпе килĕшетĕр-и?***

# Валентина Эльби



Валентина Андреевна Эльби 1913 çулхи раштавăн 18-мĕшĕнче Тăвай районĕн Кивĕ Пуянкасси ялĕнче çуралнă.

Тăван ялти пуçламăш шкулта, Кавалти сакăр çул вĕрентекен шкулта пĕлӳ пухнă.

1930 çулта Шупашкарти медицина техникумне вĕренме кĕнĕ, анчах унта пĕлӳ илме май пулман.

1938-1968 çулсенче — Радиокăларăмпа телевидени комитетĕнче ачасем валли хатĕрлекен кăларăмсен редакторĕ пулнă.

Литературăри пултарулăха 1946 çулта пуçланă.

Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ.









# В. Эльби çуралнӑ вырӑн



# Хайлавĕсем

«Малтанхи савни»

«Юратнă мăшăрсăр»

«Тинĕс чечекĕ»

«Пулас кинсем»

«Эпĕ халь телейлĕ»

«Качча кайсан»

«Каччăпа вылясан»


















# «Каччăпа вылясан» калав

Калав тăватă сыпăкран тăрать: «Икĕ йĕкĕтрен çуралнă ача», «Прасуни», «Унти», «Прасуни». Калаври тĕп геройсем- Унтилетпе Прасуни. Пĕри сумлă çемьерен, чаплă тăхăнакан хĕр, теприн амашĕ те ĕçке ернĕ, арçынсемпе çыхланса кайнă. Ыр çемьерен тухнă хĕр качча каймасăр ача çуратса хăйен ятне ярать, начартарах çемьерен тухни вĕренӳре те, ĕçре те çитĕнӳсем тăвать, ялти сумлă каччăпа пĕрлешет.



***Калав тĕрле ваттисен сăмахĕсемпе пуян, вĕсем хăш героя сăнласа параççĕ тесе калама пулать?***

«Чавса çывăх та  çыртаймăн»

«Яшка вутпа, этем ĕçпе пиçет»

«Улми йывăççинчен аякка ӳкместь»



Калав вĕçенче автор çапла шухăш-пĕтĕмлетӳ тăвать:

***«… Хĕр чысне-тивĕçне куç пек упраса качча тухать. Ырăпа çуралнă юрату ĕмĕре пырĕ».***

Эсир çак сăмахсене мĕнле ăнланатăр?

# «Общее и уникальное»

**Унтилет**

Сумлă çемьерен, чаплă тăхăнакан хĕр. Шкул пĕтерсе тухсан ниçта та аякка вĕренме ямаççĕ ашшĕпе амашĕ, ĕçлеттерессишĕн те хыпмаççĕ. Икĕ каччăпа çыхланса кайса ача суратать.

Икĕ хĕр те ял хĕрĕсем, пĕр класра вĕренеççĕ, юлташсем

**Прасуни**

Амăшĕ ĕçке ернĕ, арçынсемпе çыхланса кайнă. Ашшĕсĕр пурăнать. Мĕн пĕчĕкренех пĕр вырăнта лара-тăра пĕлмен хĕр, тантăшсен тиркесе хăй çумĕнчен тĕртсе яман. Веренӳре те, ĕçре те çитĕнӳсем тăвать, ялти сумлă каччăпа пĕрлешет.

# В. Эльби хайлавӗсем

- «Тинӗс чечекӗ»
- «Каччӑпа вылясан»
- «Малтанхи савни»
- «Пулас кинсем»
- «Юратнӑ мӑшӑрсӑр»
- Эпӗ халь телейлӗ»
- Качча кайсан»

# *Пĕтĕмлетӳ*

Çапла майпа Унтилетпе Прасуни хирĕçле сăнарсем. Пĕри сумлĕ çемьерен, теприн амăшĕ те ĕçке ернĕ. Улми йывăççинчен аякка ӳкместь теççĕ, анчах та ку ваттсен сăмахĕ пирĕн геройсем çинчен мар.

Çак калавра дидактика тĕп вырăна тăрать. Пĕрре калав вулакана ашшĕ-амăш çылăхĕшĕн усал ят ачине тивнине калать, тепре ача-пăчана ытлашши иртĕнтерни ырри патне илсе çитерменни çинчен калать. В.Эльби вулакана пурнăçра укçапа çителĕклĕх çеç çынна телей кӳме пултарайманнине тĕслĕхлĕ кăтартса парать.

# Пурнăçĕпе кун-çулĕ

Хайлавĕсем

Эпиграф

Карта

«Ватăлсан» калав

«Хăрнă вĕрене» калав

Калавсенчи тĕп проблемăсем

Вĕреннĕ материала çирĕплетни

Пĕтĕмлетӳ

Ĕçсем

# Урок эпиграфĕ:

***Ват çынна канлĕх кирлĕ,***
***çамрăк çынна юрату кирлĕ.***

Ваттисен сăмахĕ



- ***Ачасем, эсир çак сăмахсене мĕнле ăнланатăр?***

- ***Эсир çак сăмахсемпе килĕшетĕр-и?***

# Улькка Эьмен



Ольга Геннадьевна Куликова) 1961 çулхи çурла уйăхĕн 31-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Авшак Эльмен ялĕнче çуралнă.

Ярмушкăри вăтам шкул, Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă.

Вăрнар районĕнчи Калининăри вăтам шкулта ачасене чăваш чĕлхипе литератури вĕрентнĕ.

1990 çулта районти «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатра ĕçлеме тытăннă.

Унтан Санарпуçĕнчи вăтам шкулта директор çумĕ, район администрацийĕнче тĕрĕслевпе йĕркелӳ пайĕн тĕп специалисчĕ пулса ĕçленĕ.

Паянхи кун«Капкăн» журнал редакцийĕнче вăй хурать.



ПУЛТАРУЛЛĂ ÇЫРАВÇĂ

# У. Эльмен çуралнӑ вырӑн



# *Хайлавĕсем*

«Ватăлсан»

«Упраймарăм сана»

«Хăрнă вĕрене»

«Çирĕп чунлисем телейлĕ»

«Ма инçе-ши çăлтăрăм?...»

«Кая юлнă ÿкĕнÿ»

«Ама çури»

«Праски аппа»








# *«Хăрнă вĕрене» калав*

Хайлавăн тĕп геройĕ – анчах шкул пĕтернĕ Наташа, умра – çутă малашлăх, пур алăк та уçă çамрăк валли. Хĕр артистка пулма ĕметленет. Нумай ачаллă çемьере çуралнă, вăл улттăмĕш ача. Наташа хăйенчен нумай çул аслă каччăна, Костьăна килĕштереть, каччăн вара хĕрпе выляс шухăш çеç. Наташăна пĕрле вĕреннĕ каччă – Лёва килĕштерть. Костьăпа çÿренĕ хыççăн хĕр ача кĕтнине туять. анчах та савни ачине йышăнмасть. Кильтисене калама хăранипе Наташа хулана аппăшĕ патне тухса каять. Хĕр ывăл çуратать, Дима ятлă хурать.



Анчах кайран аппăшĕ те Наташăна кăларса ярать. Юлашкинчен хĕр ниçта каяйманнипе, çăлăнăç тупайманнипе çакăнса вилет. Хăй кăна мар, пĕчĕк ывăлĕн пурнăçне те татать.

# *«Ватăлсан» калав*

Маня аппа ывăлĕсене пăхса ӳстерет, ура çине тăратать, юлашкинчен никама та кирлĕ мар пулса юлать. Ăна килĕнчен йытă пек кăларса яраççĕ. Апат та çитермеççĕ юлашки çула тухиччен, йытта валли хатĕрлене юçĕхнĕ яшкана тыттараççĕ. Çавна çиет Маня аппа. Арăмĕ мĕнлĕ хăтланинe пăхса тарса ывăлĕ нимте чĕнместь. Ачисене чăрмантарас мар тесе кинеми ваттисен çуртне тухса каять. Мĕнле йерес тесен те, чунĕ мĕнле ыратсан та никама та кăтартмасть. Кӳршĕсем ывăлĕн çемйи пирки начар ан калаçчăр тесе хăй тухса кайнă пек тавать. Маня аппа кӳршĕ хĕрне, Ленăна çеç кирлĕ пулать, ывăлĕсем те килсе пăхмаççĕ ăна. Маня аппа ваттсен çуртĕнчен хăйĕн юлашки кунĕсене ирттерсе куçне хупать.



# Ыйтусем:

- 1. Мĕнле шутлатăр, мĕншĕн автор калава «Хăрнă вĕрене» тесе ят панă?
- 2. Калавра эпир ашшĕ-амăшĕ хĕре ăнланманнине куратпăр. Енчен те ашшĕ-амăшĕ хĕре ăнланнă, каçрнă пулсан мĕнле пулса тухĕччĕ-ши хĕр шăпи?
- 3. Мĕнле шутлатăр, Наташа пурнăçĕнче çапла чăрмав иксе тухман пулсан кампа пулĕччĕ-ши Наташа?
- 4. Наташа пурнăçĕ çапла пулса ан тухтăр тесе эсир ăна мĕнле канаш сĕнме пултарăттăр?

# *Ыйту:*

«Ват çын пĕр пĕремĕк парсан та савăнать»
«Ват çын телейĕ вансах тăрать»
«Ват çын хисепе юрататать»
«Ват çын пурнăçĕ ват пек йӳçĕ»

***Эсир çак ваттсен сăмахĕсене мĕнле ăнланатăр? Вĕсем калавпа тӳр килеççĕ-и? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.***

pedsovet.su

# «Мозговая атака»

***Проблема:*** Мĕншĕн Наташăн пурнăçĕ çапла пулса тухать?

**1-мĕш ушкăн**: Шухăш генераторĕсем:

- Наташа тин çеç шкул пĕтерет, умра – çутă малашлăх, ĕмĕтсем. Наташа хăйĕнчен аслăрах качча килĕштерет, унран йывăр пулать.
- Наташăн ачине Лёва йышăнмасть, хĕр хулана аппăшĕ патне тухса каять, анчах кайран аппăшĕ те ăна кăларса ярать.

**2-мĕш ушкăн:** Ашшĕ-амăшĕ хĕре ăнланмаççĕ, савна каччă та унран пăпанать, хĕр пĕччен юлать. Ашшĕ-амĕшĕ, хĕр хушшинче ăнлану пулмалла.

сапăрлăх

воспитани

***У. Эльмен хайлавĕсенчи теп проблемăсем***

ăрусен хушшинчи ăнланманлăх

кăмăл-сипет

мораль

ăнланман лăх

# *Пĕтĕмлетӳ*

Çыравçă калавсенче сапăрлăх, мораль, ĕçкĕ проблемисене мала кăларать. Унăн геройĕсем – çамрăк хĕрсем, шкул ачисем, ватă çынсем. Калавсенче эпир çемьери хутшанăва, ăрусем хушшинчи ăнланманлăха куратпăр.

Пĕчĕк произведенисенче те Эьмен пултарулăхĕ, хăйĕн шухăшĕ курăнать. Çыравçă геройсен майлă пулнине эпир куратпăр, вĕсемшĕн кулянни, вĕсене пулăшма тăрăшнине сисетпĕр.

FotoraLisa79@mail.ru

# Пурнăçĕпе кун-çулĕ

Эпиграф

Карта

Хайлавĕсем

«Икĕ карчăк» калав

«Вилес кун» калав

Вĕреннĕ материала çирĕплетни

Пĕтĕмлетӳ

Ĕçсем

# Эпиграф:



Хăй килне пырса пăхрĕ тет амăшĕн чунĕ.
Мăрьере тĕтĕм çук, кантăкра çутă çук.
Хулана ларса кайрĕ тет амăшĕн чунĕ
Каçхине, пуйăсра вырăнсем пушă чух.

Ачисем патне çитрĕ тет амăшĕн чунĕ.
Итлесе тăчĕ тет пĕр кана алăкран.
Куççульпех йĕрсе ячĕ тет амăшĕн чунĕ
Çак килте, çак йышра ун сăмахĕ çукран.

Юрий Сементер



- ***Ачасем, мĕн каласшăн пулни-ши Юрий Сементер çак сăвă йĕркисемпе?***

# Арсений Тарасов



1959 çулта çĕртме уйăхĕн 28-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Пăлакас ялĕнче çуралнă.

1973 çулта Туçари вăтам шкулта вĕренсе тухнă

Вĕреннĕ çулсенче «Çилçунат», республикăра тухса тăракан хаçат-журнала, Чăваш радио редакцийĕсене çырсах тăнă.

Диплом илнĕ хыççăн Куславкка районĕн хаçатĕнче тăлмачра, кĕске вăхăтшар Чăваш кĕнеке издательствинче, «Хреçчен сасси» хаçатра вăй хунă.

1989 çулта пĕтĕм Союзри çамрăк çыравçăсен Мускавра иртекен семинарне хутшăннă

2001 çулта К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕнче çыравçăн «Инçет телей çути» пьесине лартнă.














А. Тарасов çуралнă вырăн

# *Хайлавĕсем*

«Сутнă пўртри юлашки каç»

«Инçет телей çути»

«Шăрчăк»

«Иисус Христос»

«Саккăрла çаптарнă ташă»

«Вилес кун»

«Кантюк Мучипе кушакĕ»

«Икĕ карчăк»

«Мунча кунĕ»

# «Икĕ карчăк»

Калаври тĕп сăнар – Прасук. Вăрăм ĕмĕр пурăнса irrтерне, нумай курнă, тӳснĕ, анчах йывăрлăхсене парăнман. Вăл ялта килĕнче пĕр кушакпа çеç пурăнать.  Ачисем унăн ӳссе çитнĕ те хулана тухса кайна. Çапла карчăк кушакпа пурăнать, анчах кушакĕ те ватă. Вăл та аран-аран чупса çӳрет. Ватă çынна ниçта та пĕччен ямасть, пĕрле йĕрлесе çӳрет. Карчăкки мунча кĕме кайсан та Праскине тухасса кĕтсе выртать.

Калавра автор ватă çынсен шăпине сăнласа парать. Праски ватă, унăн кӳршĕ карчăккисем ватă, карчăккисен чĕр чунĕсем те ватă.



Праскин кушакĕ телĕкре тытнă шăшийĕ те ватă. Калав вĕçĕнче «Пиçам» (хуçи ăна çапла чĕнет) карчăккине хĕрхенсе, пĕччен юласран хăраса , мĕншĕн тесен кĕçех хăй те вилме пултарарть,
кӳршĕ кушак аçийĕ патне кайма шутлать.

# «Вилес кун»

Калавра Укахви шухăшлавĕ, аса илĕвĕ тăрăх Хресчук пурнăçне витĕмлĕн сăнлать.

Хресчука Укахви ялан пăхса тăнă. Вăл пĕр кун ун патне килсессĕн ватă карчăк килĕнче такампа ятлаçнă çĕре лекет. Хресчук хăйĕн валли вилсессĕн тăхăнма хатĕрленĕ япалисене ывăлĕ сутса ĕçсе янă иккен. Куншăн карчăк пăшăрханса ӳкет.

«…чысна мар, сăн пуçна та çухатрăн ĕнтĕ. Ĕретрен тухса ӳкнĕ йăлт, çын манерĕ юлман вĕть. Кил-çурта сутса ĕçсе яр тата! Сутăн та-ха. Эп вилессе çеç кĕтетĕн пулĕ-тăр!»

Çак сăмахсене карчăк ывăлне вăрçса калать. Хресчук ятлаçнă хыççăн тепĕр кунне вилет.



# Ыйтусем:

1. Калавӑн тӗп шухӑшӗ ҫак йӗркесенче курӑнать: «Юхать юхан-шыв юхмасть вал тӑвалла; иртет пирӗн ӗмер – килмест вал каялла». Эсир ҫак йеркесене мӗнлӗ ӑнланатӑр?

2. «Эх-хе-хей пурӑнӑҫӗ… ҫавӑн вӗҫне тӑрса юлтӑмӑр иккен: ачасем вырӑнне выльӑх-чӗрлӗх… Чун тепӗр чунсӑр пурӑнма пултараймасть ҫав, чун ҫумми пекки кирлех…» эсир Праски каланӑ сӑмахсӗне мӗнле ӑнланатӑр?

3. Мӗнле шутлатӑр, мӗншӗн автор калаври геройсен кил хушшинчи чӗр-чунсене те ватӑ сӑнартан сӑнласа парать? Мӗн каласшӑн пулнӑ автор?

# Ыйтусем:

1. Мĕнле шутлатăр, мĕншĕн автор калава «Вилес кун» ят панă?
2. Автор калавра мĕнле проблемăсене хускатать?
3. Мĕнле шутлатăр, меншĕн А. Тарасов хăйен хайлавĕсенче ытларах  ватă хĕрарăм, хĕрарăм-анне сăнарне кăмăллать?

pedsovet.su

# *«Гипотеза» приёмĕ*

- **Проблемăллă ситуаци:** Праски кинеми килте пĕччен пурăнать, ăна йăпатса пурăнаканни те Пиçам кушак çеç. Ачисем ÿссе çитсе тухса кайса пĕтнĕ

- **Проблема:** Ывăлĕсем амăшĕ пирки манса кайнă.

- **Проблемăна татса памалли çул-йĕрсенчен пĕри:** çамрăк ăрăвăн ваттисене хисеплеме вĕренмеллĕ, вĕсене сума сумалла, пулăшмалла.

- **Гипотезăна çирĕплетни:** Кинеми ывăлĕсем час-часах килсе çÿремеççĕ, кинеми кушакпа çеç йăпанса пуранать, анчах кушакки те ватă. Чĕр-чун ват çынна хĕрхенет, ăна ниçта та пĕччен ямасть.

# *Пĕтĕмлетӳ*

А. Тарасов калавсенче хальхи пурнăçа кăсăклантаракан ыйтусене хускатма тăрăшнă. Çыравçă ватă хĕрарăмсен, хĕрарăмсен-амăшсен сăнарĕсене кăмăллать. Ытларах чухне вĕсем пĕччен тăрса юлнăран (ачисем çĕре кĕнĕ, аякка тухса кайнă, тăван киле манса кайнă, çынлăха çухатнă), чĕр-чунсемпе («Икĕ карчăк»), хурт- кăпшанкăра («Шăрчăк») йăпанаç тупаççĕ, вĕсенче хӳтлĕх шыраççĕ.

Автор калавсенче ытларах философиллĕ шухăша палăртма тăрăшать. Пуринчен ытла геройсен психологизмне уçса пани тĕл пулать.

FokinaLida75@mail.ru

# *Киле ĕç*

***Урокра çырса пынă лекци материалне вуламалла. килĕшнĕ пĕр-пĕр хайлава вуласа килмелле, вулав дневникĕнче палăртусем тумалла, кĕске анализ хатĕрлемелле***

